ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ УЙРĂМАХ СЫХЛАМАЛЛИ ÇУТ ÇАНТАЛĂК ТЕРРИТОРИЙЕСЕМ ÇИНЧЕН" САККУНЕН 28.1 СТАТЙИНЕ УЛШĂНУ КЕРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2024 çулхи ака уйăхĕн 23-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче уйрăмах сыхламалли çут çанталăк территорийĕсем çинчен" 1996 çулхи ака уйăхĕн 15-мĕшĕнчи 5 №-лĕ саккунĕн (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 1996, 10 №; 2000, 37 №; 2003, 53 №; 2004, 61 №; 2006, 67 №; 2007, 74 №; 2008, 77 №; 2012, 92 № (I том); "Республика" хаçат, 2012, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 3 №; 2014, 5 №; 2015, 2 №; 2017, 4 №; "Республика" хаçат, 2018, раштав уйăхĕн 5-мĕшĕ; 2021, ака уйăхĕн 30-мĕшĕ, чӳк уйăхĕн 17-мĕшĕ; 2023, çу уйăхĕн 31-мĕшĕ) 28.1 статйин 2-мĕш пунктне улшăну кĕртес, унта çакăн пек çырса абзац хушса хурас:

"уйрăмах сыхламалли çут çанталăк территорийĕсенче экскурсовод (гид), гид-куçаруçă тата проводник-инструктор пулăшăвне паракан юридически сăпатсем, уйрăм предпринимательсем тата гражданасем экскурсоводсен (гидсен), гид-куçаруçăсен тата (е) проводник-инструкторсен туристсене (экскурсантсене) ертсе çӳренĕ чухне тивĕçлĕ аттестаци пурри енĕпе,

ятарласа пĕрле ертсе çӳремелли туризм маршручĕсемпе çӳренĕ (иртсе çӳренĕ) чухне проводник-инструктор туристсене (экскурсантсене) ертсе çӳрес енĕпе Федерацин "Раççей Федерацийĕнчи турист ĕç-хĕлĕн никĕсĕсем çинчен" 1996 çулхи чӳк уйăхĕн 24-мĕшĕнчи 132-ФЗ №-лĕ саккунĕн 19^3 статйин пĕрремĕш пайĕнче кăтартнă требованисене пăхăннине.".

2 статья

Çак Саккун 2024 çулхи çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ О. Николаев

Шупашкар хули
2024 çулхи ака уйăхĕн 24-мĕшĕ
25 №